**Мĕншĕн эсĕ, çамрăк тăванăм...**

(Романс)

Мĕншĕн эсĕ, çамрăк тăванăм,
Пуçа усса хирте çÿретĕн?
Пĕр пуç халлĕн сарăхса кайрăн.
Мĕншĕн чунна хуйха ÿкертĕн?

Ĕмĕтпе пурнăçна пурăнсан
Савнă лашу ÿксе вилчĕ-и?
Е пус хушшинче юрласан
Сана темле шухăш кĕчĕ-и?

Е пĕр хирти сарă пăрчăкан
Тÿртĕн хыпар курсе пачĕ-и?
Е тахçанах сиснĕ хыпарăн
Сăмахĕ чăн тĕрĕс пулчĕ-и?

Анчах, савнă çамрăк тăванăм,
Сан хуйхуна эпĕ пĕлеймĕп,
Ху хуйхуна мана калаймăн,
Ăна санран ыйтма хăяймăп.

1899

*Турхан, Я. Мĕншĕн эсĕ, çамрăк тăванăм... : [сăвă] / Я. Турхан // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренÿпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 23.*